Петр Яковлевич Яковлев (Петĕр Яккусен) 1950 ç. çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Упаçырми ялĕнче çуралнă. 1968–1970 çç. Совет çарĕнче хĕсметре тăнă. Çартан таврăнсан И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕнĕ. 1975 ç. ăна хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ хыççăн çамрăка Чăваш АССРĕн министрсен Совечĕ çумĕнчи Наукăпа тĕпчев институтне ĕçлеме янă, кунта вăл виçĕ çул тăрăшнă.

1978–1983 çç. Красноармейски тата Элĕк районĕнчи шкулсенче вĕрентнĕ. 1983 ç. Петр Яковлевича Чăваш патшалăх университетне чĕнсе илнĕ, кунта вăл 2000 çулччен филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ пулса тăнă (1989). 1986 ç. П.Я. Яковлева СССР писателĕсен союзĕн членне илнĕ. 2000–2007 çç. вăл Мускаври Библи куçарăвĕн институтĕнче ĕçленĕ, унтан 2012 çулччен Чăваш патшалăх культурăпа ӳнер институчĕн доценчĕ, каярахпа культура факультечĕн деканĕ пулнă. 2012 çултанпа Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче филологи енĕн аслă ăслăлăх ĕçтешĕ пулса вăй хурать.

Малтанхи сăвви 1967 ç. пичетленнĕ. Вăл — «Тăм тăвайкки вăййисем» (1985), «Уй варринче» (1987), «Юман чĕлхи» (1990), «Çавра кӳлĕ» (1993), «Çĕн уйăх çути» (2006), «Кĕмĕл кимĕ» (2010), «Шурă пĕлĕтсем» (2012) кĕнекесен авторĕ. Ача-пăча валли «Кумаляк» (1984, 2005), «Эснереш» (2007) ятлă проза кĕнекисем кăларнă.

Хальхи чăваш поэзийĕнче Петĕр Яккусен пултарулăхĕ чи пĕлтерĕшлĕ вырăнсенчен пĕрне йышăнать. Унăн сăввисене тепĕр пултаруллă тăватă чăваш авторĕн сăввисемпе пĕрле 2017 ç. Мускавра тухнă «Современная литература народов России. Поэзия» антологине кĕртнĕ.

ПЕТĔР ЯККУСЕН: пурнăçĕпе пултарулăхĕн саманчĕсем

ПЕТĔР ЯККУСЕН ПУРНĂÇĔПЕ ПУЛТАРУЛĂХĔН САМАНЧĔСЕМ

Критика статйисем, калаçусемпе интервьюсем

Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗ

ПЕТӖР ЯККУСЕН:
пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗн саманчӗсем

Шупашкар — 2020

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3(2=635.1)
П 29

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн
Ăслăлăх канашĕ йышăннипе пичетленет

Ум сăмах çыраканĕ тата яваплă редактор
В.В. Никифорова

П 29 **Петĕр Яккусен: пурнăçĕпе пултарулăхĕн саманчĕсем** (критика статйисем, калаçусемпе интервьюсем) / Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ; ум сăмах çыраканĕ тата яваплă редактор В.В. Никифорова. — Шупашкар: ЧПГĂИ, 2020. — 208 с.
ISBN 978—5—87677—257—2

Кĕнекере Петĕр Яккусен чăваш поэзине «илсе килнĕ сăмаха» хакланă ĕçсене пуçтарса пичетленĕ. Кăларăма кĕнĕ критика статйисемпе интервьюсенче тишкерӳçĕсем Яккусен поэзине тĕрлĕ енчен пăхса тухнă, пурнăçĕпе пултарулăхĕ хушшинчи çыхăнăва тупма тăрăшнă.

Кăларăм ăсчахсемшĕн çеç мар, шкулта тата аслă шкулта вĕрентекенсемшĕн те, студентсемшĕн те, литературăпа кăсăкланакансемшĕн пуриншĕн те усăллă пуласса шанатпăр.

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3(2=635.1)

ISBN 978—5—87677—257—2
© Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2020

«Чун тĕнчин çул çӳревçи...»*

(Петр Яккусен поэт-филолог 70 çул тултарнă май)

Çутçанталăк калать: кашни вăхăт паха,
Кашни вăхăт пĕрре çеç килен йăл самант...

«Çул иртсе пынăçем çутçанталăк паха...»

Чӳречери çăлтăрпа
Калаçмалăх чĕлхем пур.

«Çывăрасчĕ — ыйăх çук...»

Сăвашлă вутпала çунатпăр,
Пире тăван сăмах ӳстернĕ,
Пире килес ăру хак патăр:
Эп — сӳнтермен,
Илсе çитернĕ.

«Часах ак çĕнĕ ĕмĕр çитĕ...»

Петр Яковлевич Яковлев (поэзире — Петĕр Яккусен) пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ: вăл поэт, тĕпчевçĕ (пĕртен-пĕр фонолог пирĕн), филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, вĕрентекен, куçаруçă. «Ман професси пĕрре кăна: филолог. <...>. Поэзи вара — шăпа», — тет поэт пĕр калаçура. («Макăрма уя ача пек тартăм...», 2008). Çак кĕнекене сăмах ăстин поэзири хăйне евĕрлĕхне кăтартса парас шухăшпа пухса кăларатпăр.

Тĕнчери поэзире, вăл шутра вырăс поэзинче те, «ăсчахçыравçăсем, поэтсем», «поэт-филологсем» текен ăнлавсем пур. Ытларах чухне вĕсем çырнă текстсенче ăс, пĕлӳ мала тухать. Поэзире ку уйрăмах куçа тăрăнать, мĕншĕн тесен чăн-чăн поэзи — туйăмран шăтса ӳсекен пулăм. Филолог е ăсчах чăн-чăн поэт пулма пултарать-и? Ăс, пĕлӳ сăвă çырма кансĕрлемест-и? Ыйтăвĕсем ансатах мар. Тепĕр енчен пăхсан, тен, йывăрах та мар. Поэт пулса çуралмалла. Çутçанталăк вара кунашкал асамлă пултарăва час-часах çĕр çине ямасть пулмалла... Филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Г.И. Федоров калашле, «поэт тени сайра шăтса ӳсет...» («Рондо»). Петĕр Яккусене, пĕр иккĕленмесĕр, çак шута кĕртмелле. Тен, çавăнпа та пуль, поэзи Петĕр Яккусеншĕн — киленĕç («Фонологи тата поэзи вăрттăнлăхĕсем», 2015). Ӳстермесĕр каласан Петĕр Яккусен чăваш литературин

* П. Яккусен «Савнă вăхăт манăн — каç пултти...» сăввинчен.

хутлăхĕнче уйрăм утрав пек курăнса тăрать, çакна туйса илме нимĕнле наука кандидачĕ пулни те кирлĕ мар. Ку кĕнекере пичетленекен статьясемпе, интервьюсемпе паллашсан çак туйăм татах та çирĕпленет.

Паллах, Петĕр Яккусенĕн илем тĕнчине йĕркеленĕ çĕре ăс пач хутшăнмасть теме çук. Вăл, пĕтĕм пултарулăхне илес пулсан та, кирлĕ чикĕрен иртмест. Унтан иртсен суя поэзи тексчĕ çуралма пултарнине нумайăшĕ туяççĕ ĕнтĕ. Филолог пулнă май, Яккусен сăмах хакне, сăвапне ăнланать, хăватне ĕненет, сăмах пĕлтерĕшне йӳнетсе ямасть; сăмахăн тĕрлĕ тĕсне тĕрлĕ хутлăхра тупать — поэзире, ăслăлăхра, куçару ĕçĕнче. Вăл хăйне хăй чи малтанах пушă, илемсĕр сăмаха хут çине çырма ирĕк памасть.

Петĕр Яккусенĕн лирика геройĕ пурнăçăн кашни самантне туллин туйма тăрăшать. Е, урăхларах калас пулсан, пурнăçăн татти-сыпписĕр саманчĕсене поэзи чĕлхипе ӳкерсе парать. «Тулаш тĕнчен выляв-ылмашăвĕ» («Хула шăв-шавĕ хыççăн шăплăха...») çеç мар, чи малтанах шалти тĕнче, кăмăл-туйăмăн тĕрлĕ тĕслĕ хусканăвĕ уншăн пĕлтерĕшлĕ, анчах та пур çĕрте те — виçелĕх, сăпайлăх. Тен, чылай чух хăйне çеç ăнланмалла, çав вăхăтрах — пуриншĕн те пĕлтерĕшлĕ. Чăваш çыннин кăмăлне палăртма пултарнă поэт. Кашни çыншăн чи пĕлтерĕшлĕ хаклăхсем пирки («Тăван çĕршыв, кил, çутçанталăк ..., пурнăç хăй») сăпайлăн, никама та ăс пама хăтланмасăр, хăй çеç тĕрĕссине ĕнентерме тăрăшмасăр, хăйĕн чун пурнăçне кăна шанса каласа парать. Хĕвĕшӳре эпир вĕсем пирки, шел пулин те, чылай чух манса каятпăр.

Поэтăн пĕрремĕш сăвви шкулта вĕреннĕ чухне «Ял пурнăçĕнче» (Красноармейски район хаçачĕ) 1967 ç. кун çути курнă. Вĕренмелле çырнă хайлавĕсене пичетлеме васкаман вăл. 1973 ç. тухнă çамрăк авторсен калавĕсемпе сăввисен «Çĕнĕ кĕвĕ» ятлă кĕнекере вăл Петĕр Асамат ятпа виçĕ сăвă кăларнă та 1980 çулччен сас паман. Çак виçĕ сăвă поэт пултарулăхĕнче питĕ пĕлтерĕшлĕ. Пĕрремĕш сăвви («Аллисене турат хуçса тытса») — романтизм витĕмĕпе çырăннăскер, кунта поэт çил ачипе юмахласа ларать. Тепĕр сăвви («Кай») — ун чухне модăна кĕрсе пыракан «ирĕклĕ сăвă», авангардизм картинче тăраканскер. Виççĕмĕшĕ — чăваш поэзийĕнче традицие кĕрсе кайнă реализм паллилĕ «Каçар мана, савниçĕм» ятлăскер. Çапла вара

çамрăк студент хăйĕн умĕнче виçĕ çул курать, малашнехи пултарулăхра чунĕ ыйтнă пĕрремĕш çула суйласа илет. Ку ĕнтĕ шырав тапхăрĕ пулнă.

Хăйĕн сассине тупсан автор 1980 çç. хыççăн çине-çинех пичетленме пуçлать. Элĕк район хаçачĕ унăн сăввисене хапăлласах йышăнать, поэт пултарулăхне пичетре пĕрремĕш хак паракании Элĕк райхаçачĕн журналисчĕ Николай Пахомов пулнă. Петр Яковлевич Яковлев ун чухне Мартынкассинчи сакăр класлă шкулта вырăс тата чăваш чĕлхисене вĕрентнĕ, директор çумĕ пулса ĕçленĕ. Н. Пахомов çамрăк поэтăн пултарулăхĕн курăмлă енĕсене çапла палăртать: «Йĕрке хыççăн йĕрке пултăр тесе мар, кашни сăмаха хăйĕн вырăнне лартса, лайăх калăпласа, яп-яка саваласа», «вулакан умĕнче ответлă пулмаллине малтанах туять», «...поэзи çинчен сăмах пырать кунта. Чăн-чăн поэзи çинчен!» («Пар, Çеçпĕл, хăв ака пуçне!», 1981). Паллă журналист сăнанисем хăйĕн пĕлтерĕшне малашне те пĕртте çухатмаççĕ. Статья ячĕ, поэт сăввинчен илнĕскер, паянхи кун хушма символла пĕлтерĕшлĕн курăнса каять. Ахальтен мар Яккусен «чăваш литературинчи иккĕмĕш поэт-романтик ята тивĕçнĕ» (История чувашской литературы XX в. Часть 2 (1956—2000): коллективная монография. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2017. С. 238).

Çак çулхинех П. Яковлевăн хăйне евĕрлĕхне унăн ентешĕ Геннадий Юмарт асăрхать. Красноармейски район хаçатĕнче вулакансене унăн сăввисемпе паллаштарнă май, вăл поэт васкаса ĕçлеменнине, тӳрех пичетлеме тăхтанине палăртать. «Кулленхи вак-тĕвекрех вăл пысăк пĕлтерĕш шырать, халăхăмăр йăлийĕркипе кăмăлне палăртма пултарать» («Паллашăр: Петр Яковлев»). Çулталăк вĕçĕнче П. Яковлев сăввисем «Тăван Атăл» журналта малтанхи хут пичетленеççĕ. Кĕске ум сăмахра Ю. Артемьев критик Çеçпĕл халалне ăша хывса тухнă поэтăн сăввисенче «куçа йăмăхтаракан йăлтăр-ялтăр сăрсем те, пушă хитрелĕх те çуккине» туйса илнине палăртать.

Ку кĕнекере Петĕр Яккусен чăваш поэзине «илсе килнĕ сăмаха» хакланă ĕçсене пуçтарса пичетленĕ. Кăларăма кĕнĕ критика статйисемпе интервьюсенче вĕсен авторĕсем Яккусен поэзине тишкерме, чунпа ăнланса илме тăрăшнă. Поэтăн илем тĕнчи çав тери анлă. Асăннă ĕçсенче тĕпчевçĕсем, паллах, унăн хăш-пĕр енне çеç уçса пама пултарнă. Урăхла каласан уйрăм самантсене тишкернĕ. Вĕсенче самана сывлăшĕ, куç курăмĕ,

стилĕ ÿкерĕнсе юлнă темелле. Калăпăр, ку е вăл тема хăй вăхăтĕнче «модăна» кĕни, т.ыт.те. Анчах та тĕрлĕ вăхăтри тĕрлĕ хаклавçă П. Яккусен сăввисене чăваш поэзийĕн тÿпинче курать. Ку вара — поэт пултарулăхне «чĕрĕ классиксен» ретне кĕртмелли çирĕп сăлтав.

Кĕнеке икĕ пайран тăрать: критика статйисем тата калаçусемпе интервьюсем. Вĕсене хронологипе вырнаçтарнă. П. Яккусен пултарулăхĕ пирки çырнă ĕç сахал мар. Пурне те вĕсене ку кĕнекене кĕртеймерĕмĕр. Чăваш Республикин Наци библиотеки унăн пултарулăхне хаклакан пĕтĕм ĕçе пуçтарса библиографи кăтартмăшĕ хатĕрлерĕ.

Петĕр Яккусен ячĕ чăваш литературинче 1980 çç. варринче паллă ят пулса тăрать. Республикăри хаçат-журналсем ун пирки çине-çинех статьясем пичетлеççĕ. А. Хусанкай, Г. Матвеева, Н. Теветкел, В. Юмарт, Ю. Артемьев, Л. Волков хăйсен ĕçĕсенче поэт пултарулăхне тĕрлĕ енчен уçса пама тăрăшаççĕ. А. Хусанкай поэтăн сăввисенче «çирĕпленсе çитнĕ сасса» илтет, хальхи вăхăтшăн модăра мар романтизм паллисене асăрхать (каярахри тĕпчевçĕсем ку шухăша татах та çирĕплетеççĕ), поэт сăввисен тупсăмне унăн ыттисем пек мар сăмахĕнче курать. «Унăн сăмахĕ — çиçĕм, кĕрлев, чĕре ĕненĕвĕпе пултарăвĕ» («Виçĕ янăрав», 1985). Поэт-художник Н. Теветкел, «Тăм тăвайкки вăййисем» (1985) кĕнекене тишкернĕ май, П. Яковлев сăввисем «этем ăш-чикĕнчи ырă туйăмсене чĕрĕ ÿкерчĕксемпе сăнарласа пани» çинчен калать, искусство жанрĕн чĕлхипе поэта «акварелист» тесе хак парать, вăл «кулленхи пурнăçра поэзин асамлă хĕлĕхĕсене» тупнине палăртать («Асамлă кĕсле — аллинче», 1985). Поэтăн асăннă кĕнекине ыттисем те пысăка хурса хаклаççĕ.

Çак тапхăртах тата П. Яковлев ачасем валли калав-юмах çырса пултаруллă прозаик ятне те тивĕçет. 1984 ç. ачасем валли çырнă «Кумаляк» ятлă кĕнеки кун çути курать. Ку кĕнекене ачасене ăнланмалла чĕлхепе çырнине, авторĕ вĕсене чунтан юратнине, вĕсен тĕнчине лайăх ăнланнине палăртаççĕ рецензентсем (Г. Матвеева).

1986 ç. П. Яковлевăн «Сас» ятлă поэми пичетленет. Критиксен куçĕ тĕлне питех пулмасть вăл, пичетре ятарласа ун пирки Л. Волков çеç тĕплĕ чарăнса тăрать («Çамрăклăх çаврăмĕсем», 1986). Тишкерÿçĕ поэт вăрçăпа мир темине çĕнĕлле уçса пама пултарнине пысăк хак парать; тĕрлĕ шаблонсенчен хăтăлса,

сӑмаха вӑл чӗрӗ пулӑм пек тыткаланине, Я. Ухсай традицийӗсене аталантарса ҫӗнӗ ҫул шыранине палӑртать. Каярах Петӗр Яккусен пултарулӑхӗнче ку жанр урӑх тӗл пулмасть: поэтӑн тӗнче туйӑмне лиро-эпика е эпика мар, лирика ҫывӑх пулни куҫкӗрет.

1990 ҫҫ. П. Яккусен поэзийӗ малалла аталанать, тишкерӳҫӗсем те поэтӑн илем тӗнчине тарӑнрах тӗпчеме пуҫлаҫҫӗ. Ку енӗпе пуринчен ытла В. Степанов (вӑл шутра — псевдонимсемпе усӑ курса та тата кулӑш формипе те — «Робинзон» монолог, 1997, т.ыт.те), С. Сатур, 2000 ҫҫ. Н. Ильина палӑраҫҫӗ.

«Вулаймастӑп Петр Яковлевӑн сӑввисене саспа. Чипер вулама пуҫӑннӑ ҫӗртех сас таҫта шала каять те ҫухалать, чӗлхе, сассӑрланса, кирлӗ мара тухать: шухӑш тӗввисен шереписем такӑнтараҫҫӗ ӑна — акӑ ӑҫта вӑл поэзи; чун шухӑшӗ умӗнче чӗлхе айвана тухать те пушанса юлнипе такӑнать. Чун сассине тӑруках тупма йывӑр»; «“Юман чӗлхи” тӗнчин кӑвапи — шухӑшсемпе тӗвӗленнӗ чун кӗвви» — ку сӑнавсене В. Степановӑн пӗрремӗш статйинчен илтӗмӗр («Куҫӑма курӑнинччӗ шевлеллӗ ката», 1990). Ҫамрӑк тӗпчевҫӗ малтанхи ӗҫӗсенчех П. Яковлев урӑхла тӗнчере — чун тӗнчинче — пурӑннине туйса илет. Апла унӑн сӑввисене те урӑхла (хӑйне тивӗҫлӗ) виҫесемпе виҫмелле, урӑхла хӗлӗхсемпе (чун хӗлӗхӗсемпе) — туйса илмелле.

XX ӗмӗрти 80 ҫҫ. иккӗмӗш ҫурри — 90 ҫҫ. пӗтӗм ҫӗршывшӑн, вӑл шутра чӑваш ҫӗрӗ-шывӗшӗн те йывӑр вӑхӑтсем пулчӗҫ. Ҫӗнйӗркелӳ тапхӑрӗнче пурӑннӑ ҫынсем ку ҫулсене, паллах, лайӑх ас тӑваҫҫӗ. Литературӑна ҫав вӑхӑтра, В. Степанов сӑмахӗсемпе каласан, «халӑх теми “модӑна”» кӗрет. П. Яковлевшӑн вара — чӑвашлӑх ҫухалса пынин «ӗмӗрхи ыратӑвӗ, унӑн тӗнчи». Ку шухӑш, пирӗн шутпа, паянхи кун та кивелмен. Поэт сӑввисен йӗркисем тӑван халӑхӑн ыратӑвне чӗре витӗр кӑларса ҫырнипе уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Тӗнчен асар-писер кисревӗ-пушарӗсене те Яккусен хӑйӗн чӗрипе сӳнтернӗн туйӑнать, вулакана та вӑл ҫав ӳкерчӗксене ҫемҫетсе кӑтартса парать. Тен, ҫавӑнпа та унӑн поэзийӗнче публицистикӑлӑх пачах та ҫук: паянхи кун нушитерчӗ пирки пӑшӑрханни ӗмӗрхи хаклӑхсем ҫинчен шухӑша ярать, вӑхӑт иртнӗҫемӗн сӑввисем кивелмеҫҫӗ.

Тепӗр статьяра В. Степанов «чунӗпе чӗмлӗхе шыракан мӑн уҫлӑхӑн ӗмӗрхи ҫул ҫӳревҫин» пултарулӑхӗнче литература тӗпчевҫисем асӑрхаман япала пирки аса илтерет: «Вӑл кашни ҫыравҫӑ

пултарулăхĕнче çав тери пысăк вырăн йышăнать, ăна кашни вулакан чунпа сисет. Çак япала — вăлтса çырни (инициатива). Вăл çук тăк, сăвăç нихăçан та поэзи тĕнчин гражданинĕ пулаймасть». Калăпăр, Геннадий Айхи инициативăна литература тĕпчевçисене тӳрремĕн панă. Ытларах чух çыракан хăйĕн пултарулăхне инициативăллă тăвать. Петĕр Яккусен вара пултарулăх пуçарăвне вулакансене панă («Шурă вăрманти шур шухăш», 2004). Çак сăлтава пула та-и, П. Яккусен сăввисем вулаканăн чунĕ варрине тӳрремĕн вырнаçаççĕ: хăш-пĕр чух вĕсене кам та пулин интерпретацилени ытлашши пулнăн туйăнса каять. Поэт сăввисем нумай пĕлӳллĕ, анлă тавра курăмлă вулакан валли çеç мар. Вулакансенчен чылайăшĕ, университетсем пĕтермен пулсан та, Петĕр Яккусен пултарулăхне çывăх туять. Чун пĕлĕвĕ (туйăмĕ) университет пĕлĕвĕнчен аслăрах пулĕ вăл...

«Яккусен — поэт-снайпер, пĕр сăвви те таçта пушлăха вĕçсе каймасть, пурте чуна пырса тивеççĕ, аманса пĕтнĕ вулаканăн асапланса пурăнас шăпа çеç юлать. Чун юнне юхтаракан вулаканăн малалла чиперех пурăнас шанчăк та пысăк...» («Çĕн уйăх çути сăввисем», 2006). Тишкерӳçĕн ирониллĕ стилĕ поэтăн сăнарлă шухăшлавлăх тарăнлăхне пĕчĕклетмест, вăл поэт сăмахне ытла кăткăслатса, ăсласа тишкерес туртăмран тытса чарать.

Вырăсла çырнă статьясенче В. Степанов Яккусен поэзине çурри шӳтлесе, çурри чăнласа космос талккăшĕнче пăхса тухать, поэтăн пултарулăхне тĕрлĕ-тĕрлĕ вăхăтпа талккăша касса тухма пултаракан вăхăт машинипе танлаштарать («Шепот серебряных волн», 2011).

Станислав Сатур тишкерĕвĕсенче ăс-хакăлпа (интеллект) интуици çыхăннă. Хăй те поэт пулнă май, вăл теприн илем тĕнчине уйрăмах сисĕмлĕ туять. П. Яккусен «халăх совеçĕн сасси» пулнине С. Сатур чăн малтан палăртать («Халăх совеçĕн сасси», 1994). Яккусен пултарулăхĕпе тăван халăх шăпи çирĕп çыхăнура пулнине унччен асăрханăччĕ-ха критиксем. Сатур ку шухăша урăх енчен çирĕплетет, поэт пултарулăхне çирĕп логикăна пăхăнса интерпретацилет. Çавăнпа та тишкерӳçĕ сăмахĕсенче суя хавха илтĕнмест.

«Чăваш поэзине хăйне уйрăммăн кĕрсе унта халĕ те ытти сăвăçсем хушшинче юттăн тăракан поэт харпăр хăй саккунĕсемпе пурăнакан, çав вăхăтрах çут тĕнче саккунĕсемпе тĕл килекен

тӗнче асамлӑхӗн ӑшне ҫав тери шала кӗме пултарайнӑ», — тет С. Сатур поэтӑн «Ҫӗн уйӑх ҫути» кӗнекине тишкернӗ май («Ирӗке ӑнтӑлни», 2006). Поэт пултарулӑхне ку статьяра вӑл анлӑ контекстра — халӑх пурнӑҫӗн, философийӗн, ӗненӗвӗн контекстӗнче пӑхса тухать, пӗтӗмӗшле поэтика, уйрӑм деталь, сӑнар ыйтӑвӗсене хускатать. Кунашкал тӗплӗ тишкерӳпе паллашсан П. Яккусен сӑввисене вуламан ҫын (унашкаллисем те, паллах, пур) та вӑл «хӑватлӑ лирик» пулнине ӗненме пуҫлӗ; унӑн чунӗнче поэт сӑввисене вулас кӑмӑл ҫуралӗ.

Поэт пултарулӑхне пур енлӗн те тарӑннӑн Надежда Ильина тӗпчет. Хӑйӗн «Поэтический мир современной чувашской лирики» (2002) кандидат диссертацийӗнче те, уйрӑм статьясенче те вӑл Яккусен пултарулӑхне тивӗҫлӗ вырӑн уйӑрать. Литература тӗпчевҫи поэт тӗнчин тӗп кӗвви-туйӑмне, сӑнарне, тӗсне, синтаксисне, пӗтӗмӗшле поэтикине тишкерет («Каллех мӑн тинӗс евӗр Атӑл...», 2001; «Петӗр Яккусен поэзийӗнчи вертикальлӗх», 2010). «Сӑвӑҫ — пурнӑҫ тӗпчевҫи» (2004) статьяра Н. Ильина П. Яккусенӗн тӗрлӗ енлӗ пултарулӑхӗпе паллаштарать, вӗрентекен, тӗпчевҫӗ, куҫаруҫӑ, поэт ӗҫӗсене пӗтӗмӗшле хак парать. «Пӗр пӗчӗк статьярах Петр Яковлевичӑн нумай енлӗ пултарулӑхне, ҫак тӗлӗнмелле ҫыннӑн хӑйне евӗрлӗхне ниепле те ҫутатса пама ҫук» пулсан та, ҫак ӗҫе тума тӑрӑшать. «Сӑвӑҫӑн пӗр пӗтӗмӗшле пултарулӑхне чуна хускатакан ҫепӗҫ тунсӑхлӑ, нихӑҫан илтмен, ҫӳлтен анакан илемлӗ юрӑпа танлаштарма пулать» — тет тӗпчевҫӗ. Унпа килӗшмесӗр тӑма май ҫук.

Петр Яковлев поэзийӗн хаклӑхне хӑй вӑхӑтӗнче поэтӑн «оппоненчӗ» Михаил Ставский те ӑнланса илнӗ («Ҫӗр хушать ҫырма», 1991). Ун шухӑшӗпе (паллах, чылайӑшӗ унпа килӗшеҫҫӗ), «Юман чӗлхи» кӗнекере «пысӑк поэзи, тарӑн философи хуҫаланаҫҫӗ, пурнӑҫ ҫӑл куҫӗ тапса тӑрать, ҫула ҫитнӗ ар сӑмахӗ илтӗнет». Критик сӑнанӑ тӑрӑх, «ҫӗр хӑй хушать ӑна сӑвӑ ҫырма, ҫутҫанталӑкӗ уншӑн чӗрӗлӗх сывлӑшне варкӑштарса тӑрать». Ку чух палӑрнӑ Василий Энтип тата Петр Яковлев «сыхчавлӑ сӑвӑ (дежурные стихи) е сӑвӑ ятне сӑвӑ хайламаҫҫӗ. Вӗсен кашни сӑвви чун туйӑмӗпе шӑранса тухать».

Вячеслав Круглов шухӑшӗпе, «чӑвашсен аван ҫыравҫисем хушшинче Яккусенӗн улӑштарайми сасси кӗмӗл-ахахӑн ялтӑрарӗ» («Чӑнлӑх утравӗнчи чунлӑх ҫутисем», 1992). Вӑлах ҫакнашкал чаплӑ поэта вӑхӑт хӑй ҫуратни пирки шухӑшлать.

Кӗнекери ытти статьясем те пире поэт тӗнчине ытларах туйма, ӑнланма пулӑшаççӗ. Вӗсен авторӗсем (Г. Юмарт, Л. Атлай, О. Кульев, Р. Прокопьева, Г. Матвеева) Яккусен поэзине хăйсен тӗнчине çывӑх туяççӗ, унӑн поэзийӗнче чунӗсене çывӑх пахалӑхсем кураççӗ. Г. Юмарт, калӑпӑр, чи малтан «митталла çынлӑхпа тӳрӗлӗх» тапса тӑнине асӑрхать («Хӑлат», 2000).

Кӗнекен тепӗр пайӗ — «Калаçусем. Интервьюсем». Вулакан ку пайра поэтӑн пурнӑç философийӗ, кӑмӑл-туйӑмӗ, поэзипе тата пултарулӑхӗн ытти енӗсемпе çыхӑннӑ ӗçӗсем, биографи саманчӗсем пирки пӗлме пултарать. Калаçу йӗркелекенсем поэт пултарулӑхне, пӗтӗмӗшле илсен, анлӑ контекста лартса пӑхаççӗ. Пӗлтерӗшлӗ шухӑшсенчен пӗри кунта: «Халӑх пурнӑçа çакӑн пек поэтсем килтереет пулсан, апла, имшер халӑхах мар-ха чӑваш» (В. Степанов т.ыт.те, «Эп юрӑ мар, пӗр çаврӑм çеç...», 1991).

Ку калаçусем поэтӑн илемлӗх тӗнчине ытларах туйса илме пулӑшаççӗ. Диалога хутшӑнакансем паянхи пурнӑç ыйтӑвӗсене хускатаççӗ: çамрӑк ӑрӑва мӗнлерех пӑхса ӳстересси, паянхи литературӑри лару-тӑру, поэзи тӗллевӗсем т.ыт. нумай ыйту тавра калаçаççӗ.

Поэт, хăй калашле, «çӗр ачи». Унӑн тымарӗсем тарӑн. «Çак халӗ эпӗ пурӑнакан кил вырӑнӗнче манӑн мӑн асаттесем 300—400 çул ытла пурӑннӑ. Пахчана тухатӑн та, çак çӗре вӗсем мӗн чухлӗ ӗмӗр таптани çинчен шухӑшлатӑн та — пурнӑç пӗлтерӗшӗ, пурнӑç туллилӗхӗ чуна таврӑнать, хам та усӑсӑр пурӑнман пек туйӑнать, ваттисем пулӑшнипе майлашкалатпӑр. Çавӑнпа та чи ăнăçлă сăввăмсем те тăван килпе тăван тавралăх çинчен çырăннисем пулас» («Фонологи тата поэзи вӑрттӑнлӑхӗсем», 2015). Поэтӑн хӑш-хӑш сӑввисене «чи ӑнӑçлисен» шутне кӗртмелли пирки тавлашмӑпӑр. Кунта ку е вӑл хаклавçӑ мӗнлерех критерисем суйласа илнинчен сахал мар килет. Хальхи чӑваш поэзийӗн анлӑ хутлӑхне илес пулсан вара, Петӗр Яккусен пултарулӑхӗ унта чи пӗлтерӗшлӗ вырӑнсенчен пӗрне йышӑнать. Ӑнсӑртран мар ку автора тепӗр пултаруллӑ тӑватӑ чӑваш авторӗпе пӗрле 2017 ç. Мускавра тухнӑ «Современная литература народов России: Поэзия» антологине кӗртнӗ.

Поэтӑн Вӑл анчах калама пултарнӑ Сӑмах пур...

«Суя илемлӗх шутласа кӑлармӑп...» — тет Петӗр Яккусен пӗр сӑввинче («Килет те кӑмӑл — савӑнса кулатӑп...»). «Чи кирли унта (сӑввисен поэтикинче. — *В.Н.*) — чӑнлӑх хуçалан-

ни, курнăçлану çукки» (С. Сатур, «Ирĕке ăнтăлни»). Поэтăн «шăнкравсенчен шăратнă чун» («Çăл куçĕсен çут кĕмĕл шăнкăравĕ...») пур пулсан, вăл «пин çул тасалăхĕ умра» («Мĕн кăмăлпа, мĕн сăмахпа...») выртнине туйса тăрсан урăхла пулма та пултараймасть. Эпир пĕлекен П. Яккусен урăхларах пулнă пулсан çак статьясем те çырăнман пулĕччĕç, ку кĕнеке те çуралмĕччĕ.

Поэт Сăмахĕ хисеплĕ. Вăл çак хисепе чун тасалăхĕпе, тӳрĕ кăмăллăхĕпе тивĕçнĕ. «Тĕнче таса вăл, ху таса пулсан...» («Çăл куçĕсен çут кĕмĕл шăнкăравĕ...»). Эпир ăна ĕненетпĕр. Поэтпа пĕрле иккĕленсе; тĕрлĕ çулпа, сукмакпа утса, анчах та чăнлăха куçран пăхса («Ах, тикĕссĕн тапмасть чĕре!», «Чăваш çĕршывĕ — юм хуранĕ...», «Вăр-вăр çаврăнать Çĕр чăмăр...»), çĕнĕрен шанчăк пирки шухăшлама хăятпăр, юлашкинчен Ĕмĕрлĕх хаклăхĕсем патне пырса тухатпăр.

Пĕр самант туйса илетĕн:
Эсĕ — хурăн, эсĕ — уй...
Нихăçан та эс вилместĕн,
Çын вилет тени — пустуй...

«Тепĕр чух тата пулаççĕ...»

...Апла, пире çак Поэтăн Сăмахĕ кирлĕ...

В.В. Никифорова,
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ

ТУПМАЛЛИ / СОДЕРЖАНИЕ

В.В. Никифорова. «Чун тĕнчин çул çӳревçи...» 3

Критика статйисем / Критические статьи

Николай Пахомов. Пар, Çеçпĕл, хăв ака пуçне! 12
Геннадий Юмарт. Паллашăр: Петр Яковлев 13
Атнер Хузангай. Молния на ладони 14
Галина Матвеева. Кумаляк . . . . —
Атнер Хусанкай. Виçĕ янăрав 16
Юрий Артемьев. Чуна уçса ăшпиллĕн калаçар-и? 18
Николай Теветкел. Асамлă кĕсле — аллинче 21
Михаил Желтов, Галина Матвеева. Сисĕмлĕ пултăр чĕри . . 23
Виталий Юмарт. Ӳсĕмри шырав 26
Леонид Волков. Çамрăклăх çаврăмĕсем 29
Владимир Степанов. «Куçăма курăнинччĕ шевлеллĕ ката» . 31
Михаил Ставский. Çĕр хушать çырма 34
Вячеслав Круглов. Чăнлăх утравĕнчи чунлăх çутисем 38
Станислав Сатур. Халăх совеçĕн сасси 40
Владимир Степанов. Робинзон 45
Владимир Степанов. ЯККУ-сан: путь пера
(из опыта чтения стихов) 50
Геннадий Юмарт. Хăлат 63
Надежда Ильина. «Каллех мăн тинĕс евĕр Атăл» 65
Менгу Тимур. «Шурă вăрманти шур шухăш» 69
Надежда Ильина. Сăвăç — пурнăç тĕпчевçи 74
Леонид Атлай. Ĕненӳлĕхпе пурăнать 80
Владимир Степанов. «Çĕн уйăх çути» сăввисем 84
Станислав Сатур. Ирĕке ăнтăлни 88
Льеж Мур. Новые вести из подлунного мира 101
Надежда Ильина. Петĕр Яккусен поэзийĕнчи вертикальлĕх . 107
Олег Кульев. «Шыв тăрăх шăпшăн шăван кимĕ» 120
Владимир Степанов. Шепот серебряных волн 124
Римма Прокопьева. «Чи малтанхи эпĕ курнă чечек —
хĕрлĕ, хитре хĕвелччĕ» 132
Галина Матвеева. Ăçта чĕнеççĕ шурă пĕлĕтсем?.. 134

Калаçусем. Интервьюсем / Беседы. Интервью

Владимир Степанов т.ыт.те калаçнă. «Эп юрă мар, пĕр çаврăм çеç...» 138
Олег Кульев калаçнă. «Христианлăх культурипе пирĕн ӳсĕмĕн тĕл пулма май килменшĕн пăшăрханатăп» 144
Галина Матвеева калаçнă. Петĕр Яккусен: «Чун канăçне тăван ялăмра тупрăм» 151
Петр Михайлов калаçнă. «Макăрма уя ача пек тартăм...» . . 159
Владимир Степанов калаçнă. «Этемĕн чăн малтан хăйĕн ăшĕнчи тасалăхпа калаçмалла» 177
Роза Власова калаçнă. «Кĕркунне çынна хăйпе хăй пулма май паратъ» 181
Людмила Сачкова калаçнă. Фонологи тата поэзи вăрттăнлăхĕсем 189

Кĕскен 197